Агробизнес аталанăвĕн утăмĕсем

# Бизнес-инкубатор пуçаруллă çамрăксем валли



***Пĕтĕм тĕнчери экономика кризисĕ хамăр ĕç çине пире çĕнĕлле пăхма хистет: çĕнĕ технологисене алла илесси, ĕç условийĕсене ялта та пурнăç паян ыйтнă шайра тытса-йĕркелесе пырасси пирĕнтен кашниншĕнех паллă. Паллă, анчах нумай чух тивĕçлĕ ĕç вырăнĕсем çукран çамрăксем ĕçе пуçăнма тăхтаса тăраççĕ. Анчах район администрацийĕнче пуçаруллă çамрăксем валли бизнес-инкубатор ĕçленине кура пирĕн çав тăхтавран тухма вăхăт ĕнтĕ. Çĕршыв ертӳçисем ял хуçалăхĕ çине тимлĕрех пăхма тытăннăран ял вăранчĕ: çĕнĕ технологисемпе хĕç-пăшалланнă хресчен тыр-пул тата выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ туса илессипе ӳсĕмлĕрех ĕçлеме пуçларĕ. Çакнашкал лару-тăрура пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕрлех хресчен (фермер) хуçалăхĕсем те ура çине тăма пуçлани сисĕнет. Анчах экономика анлăшĕнче çĕннине вăй илме час-часах çăмăл мар. Çĕр ĕçĕнчи пекех, ытти отрасльсенче ĕç пуçаракан предпринимательсен паян ăçтан пулăшу кĕтмелле? Ку ыйту ялта пурăнакан вуншар-çĕршер çынна шухăшлаттарнă, шухăшлаттарать те. Ку ыйту çине пулакан хурав йăлтах хамăртан килет. Паянхи пирĕн калаçу шăпах çак çул çинчи пулăшуçăсенчен пĕринпе. Редакци хăни – «Районăн бизнес-инкубаторĕ» ертсе пыракан компанин директорĕ Евгений Николаевич СУББОТИН.***

**– Евгений Николаевич, районти пĕчĕк тата вăтам бизнесра юлашки вăхăтра ĕç чĕрĕлни курăнать-и? Умри çĕнĕлĕхсенче «Районăн бизнес-инкубаторĕн» тӳпи пур-и? Районта çак пысăк та çĕнĕ ĕçе пуçарса ятăр та ĕç вырăнтан тапранни курăнать-и?**

– Çĕнĕлĕх вырăнтан тапранни куçкĕрет. Ял çыннисем ăна кĕтни пирки те иккĕленӳ çук. Пĕрремĕш кун мар ĕнтĕ районти бизнесăн ырă енĕсем куç умĕнче пулса иртеççĕ. Унччнехи çулсенче агробизнес уксахлани чуна ыраттаратчĕ пулсан, Раççей ертӳçисем пĕлтерĕшлĕ ку ыйту çине тимлĕх уйăрма пуçланăран ял çынни те ыйхăран вăранчĕ пулас. Пуçарулăх кăтартма вара районта пур условисем те çитеççĕ. 2-3 çул каялла Патшалăх Думи пĕчĕк тата вăтам бизнеса пулăшасси пирки кăларнă федераллă саккун регионсенче бизнес-центрсем уçассине никĕслерĕ. Пирĕн республикăра та вăл икĕ çул каяллах хăй ĕçне пуçарчĕ. Акă черет районсене те çитрĕ. Паян эпир ку тĕлĕшпе çанă тавăрса ĕçлетпĕр. Харпăр хăй бизнесне пуçăнакансене хамăр бизнес-инкубатора чĕнетпĕр.

**– Районта бизнес-инкубатор ĕçлеме пуçланăранпа нумаях та вăхăт иртмерĕха, анчах сирĕн кабинетсенче çĕнĕ предпринимательсем ĕç вырăнĕсем йышăнчĕç те ĕнтĕ. Вырăнсем татах пур-и?**

– Çапла. Анчах паянхи куна вăл вырăнсем тăваттă кăна юлчĕç. Хăйсен ĕçĕсене пуçаракансене пирĕн условисем килĕшеççĕ. Пирĕн учредитель район администрацийĕ пулнăран унччнехи ял хуçалăх управленийĕнче пирĕн специалистсемпе хамăрпа ĕçлес текенсем валли ĕç пӳлĕмĕсем уçăлчĕç. Пирĕн тĕллев ялсенчи ĕçчен те пултаруллă çамрăксене ял хуçалăх тĕлĕшпе предпринимательствăна кĕртсе ярасси. Ан тив, вĕсем те хăйсем туса илнĕ ӳсен-тăран тата выльăх-чĕрлĕх продукцине хăйсене тивĕçтерекен хаксемпе вырнаçтарма пултарччăр. Пирĕн ĕç вара – вĕсене пулăшасси. Пирĕн патра ĕç вырăнĕ илекенсем уйăхсерен вырăн укçи 1650-1930 тенкĕ тӳлеççĕ. Çак хакпа вĕсем пирĕн патăмăрти компьютерсемпе, сканерпа, копировальнăй аппаратсемпе, факспа, «1С: Бухгалтерия. Версия 8» тата право ыйтăвĕсемпе тивĕçтерекен «Консультант плюс» программăсемпе, интернетпа усă курма пултараççĕ. Ĕç вырăнĕ район центрĕнче пулни те кунта пĕлтерĕшлĕ.



**Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Светлана Викторовна Мусаева практикăлла юрист – «Бизнес-инкубатор» çăмăллăхĕсемпе пуçласа усă куракансенчен пĕри. «Ĕç вырăнĕ лайăх, хакĕсем килĕшӳллĕ», - кăмăллăн калаçать Светлана. С. Мусаеван ĕç вырăнĕ райадминистрацире пулнăран юрист пулăшăвĕпе усă курас текенсем паян пĕр пăркаланмасăр Светлана Викторовна пулăшăвĕпе усă курма пултараççĕ. «Ĕçлетпĕр. Çынсем килеççĕ те пурин ыйтăвне те тивĕçтерме тăрăшатпăр», – терĕ Мăн Сĕнтĕртен куллен çакăнта çӳрекен С. Мусаева юрист.**

**– Бизнес-инкубатор пĕр вырăнта тăманнине мĕнле тĕслĕхпе çирĕплетейĕретĕр?**

– Ку ыйту, ман шутпа, чи вырăнли. Пирĕн паян пĕр вырăнта тăма юрамасть. Бизнес-инкубатор та аталанса пырать. Çак кунсенче «Моргаушскагроснаб» территорийĕнче технопарк тума пуçларăмăр. Кунта районти предпринимательсем производство линийĕсем вырнаçтарма пултарĕç. Çавна май эпир халăхран ял хуçалăх продукцине пухса тирпейлессипе лайăх сĕнӳсем кĕтетпĕр. Кунпа пĕрлех строительство материалĕсем туса кăларасси те кун йĕркинче тăрать. «Моргаушскагроснаб» территорийĕнчи технопаркра çăмăллатнă майпа кирек мĕнле оборудовани вырнаçтарса производство линийĕсем уçма та меллĕ пулĕ. Çăмăллăхсем предпринимательствăна тин кăна кӳлĕнекенсем валли виçĕ çуллăха пулĕç. Хăвăр шухăшăрсемпе эсир паян район администрацийĕн экономика пайне е «Бизнес-инкубатор» пӳлĕмне кĕме пултаратăр. Пирĕн телефонсем: 63-3-45, 62-3-41, 8-919-667-03-87.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Тăрăшуллă ĕç коллективĕсенче

# Халăхпа яланах тарават



Мăн Сĕнтĕр райпо коллективĕн ӳсĕмĕсем пирки эсир пĕрре мар илтнĕ ĕнтĕ. Вĕсен ӳсĕмĕнче пирĕнтен чылайăшĕ Муркаш сăнне куратпăр, вĕсенчен тĕслĕх илсе харпăр хăй ĕçне аталантаратпăр. Эсир сăн ӳкерчĕксенче райпо аталанăвне пĕчĕк мар тӳпе хывакан ĕçченсене куратăр. Вĕсем – Москакассинчи «Илем» кафере вăй хуракансем. Миллионшар тенкĕлĕх тавар çаврăнăшра вĕсенчен кашнийĕнех тӳпи пур. Çакна татах курăмлăрах тăвас тесе Елена Селюшкина, Надежда Шутеева, Марина Ермакова поварсем (пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре) ирĕн-каçăн тăрăшаççĕ, кафене килекенсене тутлă апатпа сăйлаççĕ.

– Килĕшет пулас эпир хатĕрленĕ апат-çимĕç. Çавăнпахтăр пирĕн патăмăртан халăх татăлмасть. Ку вара пире татах та тăрăшуллăрах пулма, тараватлăха çӳллĕ шайра тытма хистет. Эпир çапла тăватпăр та, – терĕ иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкри Л. Гаврилова ĕçрен уйрăлмасăр. Сăмах май, Лидия Федоровна кафери аслă повар тата производство заведующийĕ. Унăн обществăлла апатлануri ĕç стажĕ 37 çул. Вĕсенчен 24 çулĕ – Мăн Сĕнтĕр райповĕнче.

Кунта ĕçлекен 18 ĕçчен икĕ сменăпа вăй хурса кафене талăкĕпех ĕçлеттереççĕ. Ку вара çул çӳрекенсемшĕн питех те вырăнлă.

– Инçе çула тухсан хырăм выçмасть тетĕр-и? Кунашкал лару-тăрура эпир хаваспах Москакассинче вырнаçнă «Илем» кафене çул тытатпăр. Вăл миçемĕш километрта вырнаçнине те пĕлетпĕр ĕнтĕ, – терĕ Мускав-Хусан маршрутпа çӳрекен çулсенчи водитель кафене кĕнĕ-кĕмен хăйне килти пек туйса тата апат пĕçерекенсене сывлăх сунса.

**Анатолий БЕЛОВ.**



Юн кунхи рубрика

# Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

***Вулавçăсем район прокуратурин рубрикине кăмăллани куçкĕретех. Çакă вĕсем хускатакан ыйтусенчен те курăнать. Паянхи рубрикăна район прокурорĕн заместителĕ, юстици советникĕ Юрий Мефодьевич СЕМЕНОВ ертсе пырать.***

## Харпăр хăй пурнăçĕн сыхлавĕ

**Паянхи пурнăçра вăрттăнлăх малти вырăна тухрĕ. Çынна хăйĕн пурнăçĕн вăрттăнлăхĕсене упрама ирĕк пур-и? Саккунпа килĕшӳллĕн мĕнле вăрттăнлăхсем тухаççĕ çак шая?**

**С. СКВОРЦОВ.**

Раççей Федерацийĕн Конституцийĕн 23 тата 24-мĕш статйисемпе килĕшӳллĕн Раççейре пурăнакан кашни гражданинăнах хăй пурнăçĕн вăрттăнлăхĕсене ыттисене пĕлтермесĕр упрама ирĕк пур.

2006 çулта йышăннă «Персоналлă кăтартусем çинчен» федераллă саккун тата 2007 çулта Раççей Федерацийĕн Правительстви информаци системисенче персоналлă кăтартусемпе ĕçленĕ чух вĕсен хăрушсăрлăхне пăхăнасси пирки ятарлă постановленипе çирĕплетнĕ положени операторсем гражданинăн персоналлă кăтартăвĕсемпе ĕçленĕ чух çыннăн харпăр хăй прависемпе ирĕкне хӳтĕлеççĕ. Çав шута çыннăн харпăр хăй пурнăçĕнчи тата çемьери вăрттăнлăхсем те кĕреççĕ.

Çынсен персоналлă кăтартăвĕсемпе ĕçлекен операторсен (патшалăх органĕсен, муниципаллă органсен, персоналлă кăтартусене йĕркелесе пыракансен тата персоналлă кăтартусем патне тухма пултаракан виççĕмĕш сыпăкри граждансен персоналлă кăтартусен хуçисен) конфиденциаллăхне упрамалла. Çак вăрттăнлăха сиресси персоналлă кăтартусен хуçисен ирĕкĕ тата саккун ыйтнă чух кăна.

Тĕслĕхрен, «Гражданла лару-тăру акчĕсем çинчен» федераллă саккунпа килĕшӳллĕн гражданла лару-тăру акчĕсем çыракана патшалăх регистрацийĕ тунă чух палăрнă кăтарту конфиденциаллă информаци шутланать. Ăна çынсем урлă сарма юрамасть.

Граждансен персоналлă кăтартăвĕсене санкцилемен йĕркепе алла илни саккуна пăсни шутланать.

## Шыв пахалăхĕ пирки

**Ĕçмелли шыв пахалăхĕ пирки нумай калаçаççĕ пулсан та вырăнсенче час-часах саккунпа пăхнă йĕркесене пăсни курăнать. Çак ыйтăва район прокуратури аларан вĕçертмест-и?**

**И. МЕРЛОВА, А. САПТЕЕВА.**

Вулакансем хускатнă ыйтупа килĕшетĕп. Пĕрремĕш хурав: ĕçмелли шыв пахалăхĕпе çыхăннă ĕçсене район прокуратури самантлăха та кун йĕркинчен кăлармасть. Нумаях пулмасть Çĕнĕ Шупашкарти «Роспотребнадзор» управленийĕн вырăнти специалисчĕсемпе артезиан çăлĕсене тĕрĕслерĕмĕр. «Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх» МУП балансĕ çинче кун пек объектсем çиччĕ. Тĕрĕслев кунĕнче вĕсенчен 6-шĕ ĕçлетчĕ, пĕри – резервраччĕ. Тĕрĕслев вăхăтĕнче санитари нормисене пăснă тĕслĕхсем палăрмарĕç, ĕçмелли шыв пахалăхĕ япăхланнă тĕслĕхсем куç умне пулмарĕç.

Çав вăхăтрах «Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх» МУП пурнăç пĕлтерĕшлĕ объектсене «Терроризма хирĕç тăрасси çинчен» федераллă саккунра тата районти терроризма хирĕç комисси йышăннă решенисенче пăхнă пек террорла ĕçсенчен хӳтĕлессипе ĕçлесе çитереймен. Çакна тĕрĕсленĕ кашни артезиан çăлĕ таврах санитариллĕ хӳтĕлев зонисен чиперлĕхĕ пăсăлни, шыв уçлакан башньăсем тата шыв тасатмалли сооруженисем патне ирĕклĕн пырса çӳреме çул пурри çирĕплетет.

Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕсемпе «Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх» МУП тĕлĕшпе представлени çырса патăмăр.

## Çĕнĕ саккун вăя кĕчĕ

**Тĕнчери экономика кризисĕ вăй илнĕ вăхăтра çĕршыв ертӳçисем пĕчĕк предпринимательствăна аталантарасси тата вĕсене тĕрлĕ тĕрĕслев органĕсенчен хӳтĕлесси пирки калаççĕ. Çав хӳтĕлеве мĕнле ăнланмалла?**

**А. ТИТОВ, В. ЕРЕМЕЕВА.**

Ыйтăва харпăр хăй ĕçне пуçлассишĕн çунакансем пуçарни сисĕнет. Çĕршыв ертӳçисем пирĕн общество экономика кризисĕнчен çĕнелсе тухасса шанаççĕ. Çакна валли çулсем уçса параççĕ. 2009 çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕнĕ «Патшалăх тата муниципалитет тĕрĕслевĕ ирттернĕ чух индивидуаллă предпринимательсен тата юридициллĕ лицосен прависене хӳтĕлесси çинчен» федераллă саккун та çавнах çирĕплетет.

Çĕнĕ саккун тĕрĕслевсен тĕллевĕсене кура предпринимательсен ĕçĕ-хĕлĕпе планлă тата план тулашĕнчи тĕрĕслевсем ирттересси пирки уçăмлăн калать. Асăннă саккунпа планлă тĕрĕслеве тивĕçлĕ органсем юридициллĕ вăйра тăракан предприятире е индивидуаллă предприниматель патĕнче патшалăх регистрацийĕ тунăранпа виçĕ çулта пĕрре е юлашки планлă тĕрĕслев хыççăн виçĕ çул иртнĕ пулсан ирттерме пултараççĕ. Анчах вĕсем саккунпа килĕшӳллĕн виçĕ çулта пĕр хутран ытла иртеймеççĕ. Çак тĕрĕслев çинчен тĕрĕслевçĕсен предприятие е предпринимателе ертӳçĕ кăларнă йышăнупа е приказпа виçĕ ĕç кунĕ маларах заказлă çырупа е ытти çавăн евĕр мелпе пĕлтермелле.

План тулашĕнчи тĕрĕслевсем ирттерме асăннă саккунăн 10-мĕш статйинче пăхнă ирĕксем май параççĕ. Вĕсем:

1) планлă тĕрĕслевре предприяти е предприниматель муниципаллă право акчĕсенче пăхнă йышăнусене пăснине пĕтерме панă предписани вăхăчĕ тухсан;

2) тĕрĕслев органĕсене граждансем, предприятисемпе индивидуаллă предпринимательсем, патшалăх органĕсем, вырăнти самоуправлени органĕсем, массăллă информаци хатĕрĕсем пурнăçа сиен кӳрекен хăрушлăхсем, çынсен сывлăхĕшĕн сиенлĕ пулăмсем, чĕр-чунсемпе ӳсен-тăраншăн, тăван тавралăхшăн, çĕршыв хăрушсăрлăхĕшĕн чрезвычайлă лару-тăру кăларса тăратас хăрушлăх пуррине, потребительсен правине пăсни пирки ыйтса çырнисем пулсан.

294-мĕш номерлĕ федераллă саккунăн тĕп положенийĕсем никамшăн та айккинче юлмалла мар. Вĕсене тĕрĕс ăнланни предприяти ертӳçисене те, индивидуаллă предпринимательсене те тĕрĕслеве çирĕп хатĕрленме тата тĕрĕслевçĕсем саккунран тухса ыйтнисене хирĕç тăма май парать.